*Шупашкарти 47- мĕш шкул ачисен хаçачĕ*



# ШĂНКĂРАВ

5 №2022, юпа уйăхĕ

## Ку кăларăмра:


1. **Шкул директорĕн - Р.И. Кириллова саламĕ**
2. **Г.Н. Волков этнопедагог çуралнăранпа 95 çул.**
3. **Шкул пурнăçĕнчен.**
4. **Кĕр илемĕ тата пуянлăхĕ**


**Хисеплĕ ĕçтешсем!**

Сире професси уявĕ ячĕпе саламлатăп! Сирĕнтен кашниех хăйĕн ĕçне чун-чĕререн пурнăçлать. Суйланă професси сире савăнăçпа хавхалану çеç кӳтĕр, кашни кун хавхалантартăр. Пурсăра та професси уявĕпе саламласа çирĕп сывлăх, çемье телейĕ, пархатарлă та çăмăл мар ĕçĕрте çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тума ăнăçу сунатăп. Сирĕн чи ырă ĕмĕтĕрсем пурнăçланччăр. Тавтапус сире!

Вĕрентекен! Яту сан мухтавлă,
Çĕршывăм сана пуç таять.
Ĕçӳ сан паян пархатарлă:
Пурнăç çулне вăл уçать.
Класа эс кĕретĕн хăюллăн,
Миçе куç сăнаççĕ сана!
Пĕлӳ тĕнчине эсĕ уçăн-
Малтан малалла талпăнма.
Чуну сан таса та яр уçă,
Чĕрӳ те хĕрӳ те вĕри.
Кашни сăмаху – ылтăн, уçă,
Яр уçă пĕлӳллĕх тĕнчи.
Вĕрентекен! Санпа мухтанатпăр,
Сана чĕререн ыр сунатпăр,
Ан сӳнтĕр санра чун ăшши!




***Р.И.Кириллова, шкул директорĕ***

# ПАЛЛĂ ЕНТЕШСЕН ÇУЛТАЛĂКĔ

*Кăçалхи çула Чăваш Республикин пуçлăхĕ Олег Николаев указĕпе килĕшӳллĕн Паллă ентешсен çулталăкĕ тесе йышăннă. Кашни халăх хăйĕн пултаруллă, маттур, мухтавлă çынсемпе пуян. Кам-ха вăл мухтавлă ентеш? Мухтавлă ентеш вăл - Чăваш енре çуралса ӳснĕ, чăваш ятне мухтава, чапа кăларнă çын. Пирĕн халăхăн мухтавлă ывăл-хĕрĕ сахал мар…*

## Чăваш çĕрĕ пултаруллă çынсемпе пуян



Чăваш Республикин пуçлăхĕ Олег Николаев 2022-мĕш çула «Паллă çынсен çулталăкĕ» тесе палăртнă. Пирĕн Республика паллă çынсемпе пуян. Вĕсенчен пĕри - Кириллова Римма Ивановна.

Кириллова Р.И ачалăхĕ Вăрнар тăрăхĕнче иртнĕ, пысăк çемьере çитĕннĕ. Вăл мĕн пĕчĕкренех вĕрентекен пулма ĕмĕтленнĕ. 11-мĕш класа ылтăн медальпе вĕренсе пĕтернĕ хыççăн, вăл И.Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен чăваш патшалăх педагогика университетĕнче физика-математика уйрăмĕнчен вĕренсе тухнă. 44-мĕш лицейра нумай çул хушши информатика, çав хушăрах директор çумĕ пулса ĕçленĕ. 2017- мĕш çулта Шупашкарти 47-мĕш шкул директорĕн тивĕçĕсене пурнăçлама тытăннă. Эпир хамăр шкул директорĕпе мухтанатпăр, вăл чăннипех те пултаруллă ертӳçĕ. Пирĕн директор Раççей шайĕнчи «Чи лайăх учитель» конкурсра икĕ хутчен çĕнтерӳçĕ пулнă, Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕрентӳ ĕçĕн хисеплĕ ĕçченĕ. Унăн ĕç стажĕ 25 çул ытла, учительсе тата ертӳçĕре ĕçленĕ опыт самаях пысăк. Римма Ивановна Кириллова пирĕн шкулăн лидерĕ, 47-мĕш шкулăн «Кĕрен парăс» штурвалне çирĕп тытса пырать.

Хальхи вăхăтра пирĕн шкулта кадет вĕрентĕвĕ лайăх аталаннă. Çак енĕпе пысăк çитĕнӳсем пур. Тата шкулта «Самбо - шкула» ятлă Раççей шайĕнчи проект та атланса пырать. 2017 çулта пирĕн шкулти 10 вĕренекен çĕршыв шайĕнче «Самбо кунĕсем -Раççей шкулĕсенче» ятлă марафона хутшăнчĕç.

Ачаранпах атте-анне пирĕнте чи лайăх пахалăхсене хывать. Вĕсем пире пурнăçра пултаруллă пулма çул кăтартса пыраççĕ. Кашни çын пултаруллă пек туйăнать мана. Пирĕн директор та хăйĕн ĕçне системăллă йĕркелесе пыма тăрăшать. «Пуçлăхăн яланах ертсе пымалла, тĕрлĕ йышăну тума хăрамалла мар, хăйĕн çине яваплăх илме пултармалла. Педагогсен йышĕ тата администраци ушкăнĕ килĕштерсе ĕçленинче - çитĕнӳ тӳпи», - тет вăл. Ятарласа тĕллевлĕн хисеп хучĕшĕн, рейтингшăн ĕçлемест вăл. Шкул коллективĕ тĕрлĕ проектсене хутшăнса пысăк ӳсемсем тăвать. Римма Ивановна ертсе пыракан коллектив пысăк, вĕренекенсен шучĕ те пĕчĕк мар - 1210 вĕренекен. Директорăн тăрăшмалăх пур. «Лайăх вĕренекен - пĕлӳ илме ăнтăлакан, хăй умне тĕллев лартса унта талпăнакан ача. 47-мĕш шкулта вĕренекен ача инициативăллă, таса чунлă, йывăрлăхсене парăнтарма пултаракан, хăй çемйине, хулине, тăван çĕршывне юратаканскер пулмалла. Шкулăн, чи малтанах, çынна, çынлăха аталантармалла», - тет вăл. Эпир, унăн вĕренекенĕсем, чăнласах та унăн сăмахĕсемпе килĕшетпĕр, малалла та тăрăшса вĕренетпĕр, çĕршыва усăллă çын пулма тăрăшатпăр.

Римма Ивановна тăрăшнипе, пирĕн шкул - Çитĕнӳллĕ шкул. Вăл ытти шкулсемпе тупăшма пултаракан, пурнăçра конкурентлă вĕренекенсене çитĕнтерекен шкул. Шкулта вĕренекенсем, вĕсен ашшĕ-амăшĕ, учительсем пĕр шухăш-тĕллевпе ĕçлеççĕ, çавăнпа та шкул çитĕнӳсем тăвать. Чи пысăк çитĕнӳ вара - ачасем, вĕрентекенсем, ашшĕ-амăшĕ хăй шкулĕпе мăнаçланнинче.

Директор шучĕпе, паянхи ертӳçĕсен пурнăç таппипе пымалла, йышпа ĕçлеме пĕлмелле, çĕнĕ шухăшсене пурнăçа кĕртме хатĕр тата йăрă, яваплă, креативлă пулмалла, лару-тăрава курса -туйса тăмалла. Ертӳçĕ мĕнле пулмалли çинчен ачасем час-часах ыйтаççĕ унран. Ачаранах çынлăха, çыннăн паха енĕсене аталантарăр, хăвăр тавра йыш чăмăртама вĕренĕр, ушкăнпа тухăçлă ĕçлеме хатĕрленĕр, пĕтĕм вăя кирлĕ çул çине ярсан, пултарулăхпа мĕнле усă курмаллине ăнланса илсен, çитĕнӳ тума пулатех тесе вĕрентет ачасене.

Пĕтĕмлетсе каласан, пирĕн шкул директорĕ - Римма Ивановна чăн-чăн Чăваш енĕн паллă та мухтавлă çынни.

***И.В. Власова, А.Г. Петрова***

# Г.Н. ВОЛКОВ ЭТНОПЕДАГОГ ÇУРАЛНĂРАНПА 95 ÇУЛ



Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ, паллă академик,Г.Н.Волков этнопедагог çуралнăранпа 2022 çулхи юпа уйăхĕн 31-мĕшĕнче 95 çул. Вăл тăван халăхшăн пите пысăк та сăвапла ĕç тунă. Геннадий Никандрович вĕрентсе каланисем, çырнă ĕçĕсем, литература хайлавĕсем паян питĕ кирлĕ. Этнопедагог хăйĕн ĕçĕсенче халăх сăмахлăхĕн жанрĕсемпе анлă та питĕ вырăнлă усă курнă. Ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, тупмалли юмахсем, халап-юмахсем час-часах тĕл пулаççĕ унăн калавĕсенче.

Геннадий Никандрович Волков Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ялĕнче 1927 султа юпа уйăхĕн 31-мĕшĕнче çуралнă. Елчĕкри вăтам шкулта, Шупашкарти пединститутра физикăпа математика факультетĕнче вĕреннĕ. Хусанти аспирантурăра ăс пухнă, шкулта ĕçленĕ, тĕпчев ĕçĕсем çырнă. Кандидат диссертацине хÿтĕлесен Шупашкара таврăннă, 20 çул ытла пединститутра ĕçленĕ. Тĕрлĕ сăлтавсене пула Мускава тухса кайнă, унта ĕçлесе пурăннă. Кăркăс, Саха, Калмăк, Тува республикисенче, Германири Эрфуртри педагогика аслă шкулĕнче ĕçленĕ, пурăннă.

1967 çулта Г.Н.Волковăн «Этнопедагогика чувашского народа» ятпа монографи пичетленсе тухать. Автор хăйĕн ĕçĕсенче тĕрĕк халăхĕсемпе вырăс халăхĕн пĕрлĕхне уççăн кăтартса парать.

Г.Н. Волков педагогика тата этнопедагогикăпа Мускаври М.И. Ломоносов ячĕпе хисепленекен патшалăх университетĕнче ятарлă курссем вуланă. Унăн концепцийĕ пĕтĕм çĕр-шывĕпе паллă. Вăлах педагогика наукисен докторĕ, профессор, СССР Писательсен Союзĕн членĕ, СССР Педагогика наукисен академийĕн академикĕ. 500 ытла наука ĕçĕ çырнă. Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ учителĕ, Кăркăс Республикин çут ĕç отличникĕ.1997 çултан Чăваш Республикин хисеплĕ гражданинĕ.

Г.Н. Волков- ачасен юратнă çыравçи. Унăн «Асанне калавĕсем», «Кил илемĕ» кĕнекисене вуншар чĕлхепе вулаççĕ. «Юманпа хĕвел» кĕнеки – ачасен юратнă кĕнекисенчен пĕри.

Г.Н. Волков - Педагогика наукисен докторĕ, этнопедагогика наукине пуçарса яраканĕ, Раççейри паллă педагог, профессор, академик.

Унăн ячĕ пирĕн асăмăрта ĕмĕр-ĕмĕр пурăнть.




## Педагогăн этнокультура компетентлăхĕ

*«Икĕ чĕлхе – икĕ ăс, виçĕ чĕлхе – виçĕ ăс. Ăслă пулар эппин! Тĕнче çине тарăнрах та анлăрах пăхар!»*
*Г.Н. Волков.*

Халăх педагогики аваллăхра йĕркеленнĕ. Кашни халăх пĕр-пĕринчен тĕрлĕ паллăсемпе, социаллă пурнăçпа экономика характеристикисемпе, çавăн пекех чĕлхепе, культурăпа, наци характерĕпе уйрăлса тăрать. Çитĕнекен ăрăва воспитани парас тата хамăр культурăна упрама вĕрентес пулать. Çавăнпа вĕренӳ результачĕсене кура хальхи вăхăтра „компетентлăх" ăнлану тухса тăрать.

Компетентлăх нумай пĕлтерĕшлĕ терминсен шутне кĕрет, апла пулсан, ку ăнлану нумай енлĕ. Пирĕн шутпа, компетентлă çыннăн проблемăна анчах курмалла мар, ăна практикăра татса пама та, тивĕçлĕ ĕçре йышăнусем тума та пĕлмелле. Педагогăн этнокультура компетентлăхĕн тупсăмĕ акă мĕнре: ĕçтешсемпе, вĕренекенсемпе, ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле тачă çыхăнса ĕçлеме пултарнинче тата хăйĕн ĕç опытне халăх хушшинче хастар сарма пĕлнинче. Çĕршывра халăх педагогикин ыйтăвĕсене чи пĕрремĕш пуçараканĕ, асăннă темăпа виçĕ монографи çыраканĕ - Г.Н.Волков профессор. Унăн кĕнекисем - педагогика наукин пысăк пуянлăхĕ. «Шел те, традицисене манатпăр, халăх йăли-йĕркисĕр культура çук, культурăсăр воспитани çук» - тенĕ чăваш халăх этнопедагогикин никĕслевçи Геннадий Никандрович Волков.

Шкулта вĕренӳпе воспитани процесне йĕркелекен тата пурнăçлакан çын-учитель. Тăван чĕлхене вĕрентекен учитель вара - уйрăм учитель. Чи малтан вăл ачапа тăван тавралăхри тата тĕнче хушшинчи посредник та, ача-пăча психикине лайăх аталантарма пĕлекенскер те, ачана пĕлӳ парса çын пулма вĕрентекен те. Учителĕн ĕçне нимĕнпе те танлаштарма çук, мĕншĕн тесен вăл çитĕнекен ăрури кашни вĕренекенĕн кун-çулĕшĕн явап тытать. Кашни çын пурнăçра пĕрре те пулин лайăх педагог пулать. Шухăшласа калană сăмах, кирлĕ вăхăтра, ачана шутламасăр тăвакан утăмран хăтарма пултарать.

Çапла вара, пирĕн пуласлăх педагогсен паянхи ĕçĕн результачĕнчен килет. Хальхи учителĕн вĕренӳ сферинче этнокультура компетентлăхне йĕркелеме пĕлмелле. Унăн тухăçлăхĕнче - пирĕн çĕршывăн малашлăхĕ. Кашни çынах пысăк ăслăлăх кăтартма пултарать.

Раççейĕн вĕренӳ тытăмĕн шайĕнче халăх педагогикин традицийĕсене çĕнетмелли тухăçлă модельсем шыраççĕ. Çакă вăл çитĕнекен ăрăва ытти халăхсене хисеплеме тата вĕсен культурине ăнланма вĕрентесси. Çавăнпа та учителĕн этника культурисем çинчен пĕлĕве тишкерме тата системăлама вĕренмелле.

Апла пулсан, педагогăн професси пахалăхĕсенчен пĕри - этнокультура компетентлăхĕ пулмалла. Вăл тăван тата ют çĕршыв культурисен йăли-йĕркисене вĕрентсе пырса, ачан нумай енлĕ пултарулăхне ӳстерсе те аталантарса пымалла.

Сăмахран:

1) кружоксем, экскурсисем, конференцисем, вĕренекенсен тĕрлĕ интересĕсене тивĕçтерекен çавра сĕтелсем йĕркелемелле;

2) ташă, музыка, халăх йăли-йĕркисем, наци вăййисем, йăла-йĕрке каçĕсем ирттермелле;

3) ашшĕ-амăшĕпе пĕрле этнофольклор уявĕсем ирттерсе çитĕнекен ăрăвăн кăмăл-сипетпе эстетика хаклăхĕсене вĕрентсе, мораль пахалăхĕсене уçса памалла.

Ватлăха хисеплемесен, иртнĕ ăрусен йăли-йĕркисене асра тытса пымасан тата наци халăхĕн ăс-хакăлне аталантармасан, ачасене юратни çинчен каласма та кирлĕ мар. Чăтăмлăх, хĕрхенӳ, ĕçченлĕх, сутçанталăкри мĕнпур чĕрĕ çынна хисеплени - çакăн пуçламăшне çемьеренех хăнăхтармалла. Шкулăн вара çак пахалăхсене малалла аталантармалла. Тăван чĕлхе урокĕсенче ачасем сăвăсем çыраççĕ, вĕсенче халăх юратăвĕ мĕнле пулмалли çинчен хăйсен сăнарĕсене кăтартса параççĕ, урăхла каласан, халăх ĕмĕчĕсене чун витĕр кăларса, вĕсене хальхи ăнлану патне çывхартаççĕ. Халăх педагогикин кăмăл-сипет идеалĕсем халăх тунă юмахсенче, легендăсенче, эпика произведенийĕсенче, юрăсенче, ваттисен сăмахĕсенче уçăмлăн палăраççĕ.

Асатте-асаннесен ырă йăли-йĕркине пурнăçа кĕртсе, çемьене чăваш тĕреклĕхĕн тĕп шăнăрĕ туса Г.Н.Волков, аслă вĕрентенкенĕмĕр, ĕçĕсене малалла тăсса пырар. Чăваш ăслăлăхне, чунхавалне çĕнĕрен те çĕнĕ, çӳллĕрен çӳллĕ шая çĕклесе малашнехи çамрăксене вĕрентсе пырар.

***И.В.Власова, А.Г.Петрова***
***чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсем***

# ШКУЛ ПУРНĂÇĔНЧЕН

Этнографический музей «Чăваш тĕнчи» открыт в 2012 году. Кабинет построен в 2021 году. Основатель музея- учитель культуры родного края Афанасьева Г.А. Музей имеет этнографическое направление, и экспозиция представлена в виде фрагмента чувашской избы. В нашем музее воспроизведен внешний вид крестьянской избы, ее внутреннее устройство и убранство, собраны разнообразные экспонаты, дающие представление о хозяйственно-бытовом укладе и трудовой деятельности прошлого.

Актуальность и востребованность музея не вызывает сомнения. Старинные экспонаты вызывают интерес; в нашем музее их можно взять в руки, спокойно рассмотреть тонкую ручную работу.

Цели создания музея:

воспитывать чувство любви к своей малой родине, гордость за своих соотечественников;

познакомить с предметами быта XIX-XX века;

использовать экспонаты на уроках и внеклассных мероприятиях;

сохранить старинные вещи.

Роль этнографического музея как нельзя лучше выражают замечательные слова:

«Любовь к родному краю, к родной культуре, к родному селу или городу, к родителям, к род-





ной речи начинается с малого - с любви к своей семье, к своему жилищу, к своей школе; постепенно расширяясь, эта любовь к родному переходит к своей стране...» Лихачева Д.С.

Мы в своей школе большое значение уделяем музейной педагогике как инновационной педагогической деятельности. В наше непростое время необходимо развивать и повышать нравственные и патриотические чувства молодого поколения. Именно музейная педагогика оказывает большую помощь в процессе воспитания личности.

Цель музейной педагогики – создание условий для развития личности путём включения её в многообразную деятельность школьного музея.

Методика «Музейная педагогика как инновационная технология активного обучения» реализовывается во внеурочной и урочной деятельности и включает в себя: проведение экскурсий, создание проектов, презентаций, проведение праздников, участие в научно-практических конференциях, работу лектора, подготовку театрализованного представления.

*Основные направления деятельности нашего музея*: информирование, обучение, творчество, общение, отдых. Информирование - Для информирования представляем работу музея на школьном сайте, готовим презентации.

Обучение осуществляется в форме экскурсий, музейных уроков, занятий в кружке, проектных работ. Экскурсии проводим не только для учащихся своей школы, а также к нам приходят воспитанники детских садов, жители микрорайона. Проводим экскурсии также для гостей школы. Экскурсии проводит учитель культуры родного





края Афанасьева Г.А., а также учащиеся, которые входят в состав Актива музея.

Экспозиции музея помогают в изложении таких учебных предметов как история, технология, рисование, музыка, литература, культура родного края.

Учителя чувашского языка также активно используют в своей работе музейную педагогику. Занятия в музее помогают учащимся яснее представить суть культуры своего народа, ее достижения, историю развития. Каждое занятие в музее имеет образовательные, воспитательные и развивающие цели.

Музейная педагогика в урочной деятельности организуется в разных направлениях:

- организация и проведение урочной деятельности, организация исследовательской деятельности, организация творческой деятельности

Типы музейных уроков: урок-экскурсия; урок-лекция; урок-исследование; урок-беседа; урок-презентация. А также нетрадиционные уроки: интегрированные уроки, уроки в форме соревнований и игр.

Творчество. Это направление реализуется с помощью педагогов дополнительного образования, проектной деятельности, викторин, встреч.

Общение. Для общения организуем встречи с интересными людьми. Организуем и посиделки, участники которой собираются для общения, развлечения в сочетании с какой-то совместной деятельностью. В нашем музее собираемся для такой совместной дея-





тельности как (вышивка, ткачество). У нас в музее есть действующий ткацкий станок. Отдых – Для организации свободного времени учащихся и взрослых мы используем такие формы: день открытых дверей, чаепитие для ветеранов, именинников и гостей школы.

Технологии, которые мы используем в музейной педагогике: игровые технологии, технология коллективных творческих дел, технологии проблемного и индивидуального обучения.

Результаты работы по данным направлениям позволяют нам считать краеведение отправной точкой воспитания, так как у наших обучающихся появилась мотивационная потребность изучения родного края.

Чувашская старина вся пронизана добром, а это очень важно в наши дни, и особенно актуально для детей школьного возраста. Приобщая детей к истокам Русской народной культуры, мы развиваем личность ребёнка. Народная мудрость гласит: «Не забывайте старь – она новизну держит». «Видел я предметы быта из ожившей старины Для меня теперь открыто.Прошлое моей страны». Старое уходит, но его нужно знать и беречь.

*Л.П. Дубова, зам.директора*

### Пирĕн шкулта - семинар

Аван уйăхĕнче пирĕн шкулта хулари директор çумĕсем валли «От профессионального учителя к успешности ученика» темăпа семинар-практикум иртрĕ. Семинара Шупашкар хулин «Мониторингпа вĕренӳ аталанăвĕн центрĕн» аслă методисчĕ Н.Г. Евтихеева уçрĕ. Семинара хутшăнакансене шкул директорĕ Р.И. Кириллова çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа ăшшăн саламларĕ. Директор шкул тата педагогика коллективĕн ĕçĕ - хĕлĕпе вĕренӳ процесĕн уйрăмлăхĕсем çинчен каласа панĕ. Семинарта педагогсем тĕрлĕ мастер-классем пăхрĕç, шкулти музейра экскурсинче пулса курчĕç, выставкăсемпе паллашрĕç. Хăнасем шкулти вĕрентекенсен професси ăсталăхне пысăк хак пачĕç. Семинар çӳллĕ шайра иртрĕ, директор çумĕсем тав сăмахсем çырса хăварчĕç.

# ШКУЛ ПАХЧИНИЧИ ӲКЕРЧĔКСЕМ...

















# КĔР ИЛЕМĔ ТАТА ПУЯНЛĂХĔ

## Пилешĕм пилеш…



Пилеш пиркки халăхра каланисем чылай. Çакă чи малтанах пилеш усăллă, сиплĕ йывăç пулнипе çыхăннă-тăр. Пилеш писĕ йывăç. Вăл лайăх авăнать, хуçăлмасть. Унран килте усă курмалли ĕç хатĕрĕсене чылай хатĕрленĕ. Кашта, пĕкĕ, кĕрепле-кĕреçе аври, савăт-сапа т.ыт.те. Авал хăш-пĕр çĕршывсенче пилешре асамлă вăй пытарăннă тесе шухăшланă. Вăл «усал вăйсене хирĕç тăрать, хăйне пăхакан çынна хӳтĕлет» тесе ĕненнĕ. Унăн çырлинчен шăрçасем туса çакнă, хĕл валли типĕтсе хатĕрленĕ.

Чăнах та, пилеш çырлипе тĕрлĕ чир-чĕртен сипленме пулать. Çуркунне типĕтсе хатĕрленĕ çырларан чей-компот вĕретсе ĕçни авитаминозран упранма пулăшнă, вăй кĕртнĕ. Унăн хуппинчен те тĕрлĕ отвар хатĕрленĕ. Усăллăхне, илемне кура çак йывăça хисеплесси, юратасси çирĕпленнĕ те ĕнтĕ халăхра. Ăна ахалех хуçсакасса пĕтересрен асăрханса каланисем вăхăт иртнĕçемĕн тĕшмĕш сĕмĕ йышăннă. Пилешре чăнах та асамлă хăват пуррине, тен, паянхи этем ĕненсех те каймасть пулĕ. Тĕрĕссипе вара - пилеш ытти йывăç пекех. Вăл йĕри - тавра хунавланса хăйĕн çемйине аталантарма пăхать, хунавсене иртмесессĕн лаптăк чăтлăхланса каять, ытти вырăна пусарма пуçлать. Мĕнпур йывăç-тĕме пăхса тăратпăр: туратсене иртетпĕр, касатпăр, лартатпăр. Пилеше те çавнашкалах пăхмалла. Енчен те пилеше пачах касма юрамасть-тĕк унран пĕкĕ мĕнле авăччĕç? Çавăнпа, тĕшмĕше уяса кăмăла ан пăсăр. Кил-çурта, пахчана тирпейленĕшĕн никама та çылăх пулас çук, сăвап çеç пулĕ.

Пилешпе çыхăннă халăх сăнанисем

- Пилеш çырли нумай пулсан хĕл вăрăм тата сивĕ килет.
- Пилеш çеçки çурăлать - хăяр лартма юрать, йĕтĕн акаççĕ.
- Пилеш кая юлса çеçке çурать - кĕр вăрăма тăсăлать.

## Кĕркунне

Шăнтать ĕнтĕ кунсерен,  
Çитрĕ ĕнтĕ кĕркунне.  
Вĕçенкайăк сассинчен



Хуйхă кĕрет чĕрене.  
Карти-карти кайăксем  
Вĕçет тинĕс леш енне.  
Тăхăннă йывăçĕсем  
Пурте сарă тумтирне.  
Хĕвел кулать сайрарах  
Шăрши пĕтнĕ чечексен,  
Йĕрсе ярĕ ак часах  
Кĕркунне те вăрансан

# ĔÇНЕ КУРА – ХИСЕПĔ

## Пирĕн анне чи лайăххи

Анне - пуриншĕн те пĕрремĕш сăмах. Пур чĕлхере те çак сăмах çепĕççĕн илтĕнет. Пирĕн анне Наталия Николаевна Тимофеева ятлă. Халĕ вăл шкулта вĕрентекен тата директор çумĕ пулса ĕçлет. Анне пирĕншĕн çĕр çинче чи лайăх, чи çывăх çын. Хăйĕн мĕн пур лайăх енĕсене пире халаллать, ăс-тăн парать, тĕрĕс çул çине тăма пулăшать. Пирĕн анне питĕ ăслă, хитре, ĕçчен. Унăн куçĕсем те, çӳçĕ те хăмăр. Эпир унпа пушă вăхăтра бассейна шыва кĕме çӳретпĕр, канмалли кунсенче кукамайпа кукаçи патне яла пулăшма каятпăр. Вĕсем пире ĕçе вĕрентсе пыраççĕ.

Эпир аннене питĕ юрататпăр, çавăнпа аннене темĕн чухлĕ ырă сăмахсем калас килет.

*Михаилпа Мария Тимофеевсем*



## Ĕç çынна илем кӳрет

Кашни çыннăн хăйĕн юратнă ĕçĕ пур. Ĕç чуна çывăххи чăнахах та ырлăх. Ĕçе кашни кун савăк кăмăлпа, тулли ĕмĕтсемпе утатăп. Ĕç  мана вăй-хал парать, çавăнпа эпĕ телейлĕ çын,- тет хăйĕн пирки шкул библиотекарĕ Ирина Николаевна Мишина.

Мĕн пĕчĕкренех эпĕ кĕнекесем вулама юрататтăм. Кĕнекесем манăн чи çывăх туссем, пурнăçри юлташсем пулса тăчĕç. Вулама юратни мана библиотекарь профессине суйласа илме пулăшрĕ, вырăс чĕлхи вĕрентекенĕ пулма та мĕн пĕчĕкренех ĕмĕтленнĕ.

Ирина Николаевна пирĕн шкулта 12 çул тăрăшса ĕçлет.  Хальхи «гаджетсен саманинче» те вулакана библиотекăна явăçтарма тĕрлĕрен çĕнĕ мелсем шырать, вăй-халне шеллемест. Хулари  библиотекăсемпе те тачă çыхăну тытать.

Çынсемпе ĕçлеме хамăра мĕнле тытма пĕлнинчен нумай килет. Тӳрех туятăн: Ирина Николаевна ăшпиллĕ, чунĕпе пуян. Вĕрентекен-и, е пĕчĕк шăпăрлансем библиотека алăкне уçса кĕреççĕ-и - пуринпе те вашават вăл. Кашнин валли ырă сăмах тупма тăрăшать. Çынпа калаçма ӳркенмест, итлеме пĕлет, кирлĕ чухне сĕнӳ-канаш пама пултарать. Библиотекăра час-часах  куравсем йĕркелет, вĕрентекенсене çивĕч темăсемпе калаçу-тĕлпулусене пухать. Ачасем тавракурăма анлăлатакан конкурс-викторинăсене хаваспах хутшăнаççĕ. Хальхи вăхăтра библиотекăна ача-пăчасем валли тĕрлĕ жанрлă литература килсех тăрать

Библиотека нихăш кун та пушă тăмасть, - кĕнекен кирлĕлĕхĕ чакманнишĕн савăнса пĕлтерет Ирина Николаевна.

«Библиотекăна пыракансем сан юратăвна, санăн пултаруллăхна туяççĕ пулсан - эсĕ телейлĕ çын», - тет Ирина Николаевна. Çапла пултăрччĕ те.

***Чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсем***

# АСРА ЮЛНĂ САМАНТСЕМ…









Ответственный редактор: И.В. Власова
Верстка тата дизайн: И.В. Власова, А.Г. Петрова
Редакци адресĕ: 428000, Шупашкар, Кăшăм урамĕ, 23 çурт, 47-мĕш шкул, 102 каб.